Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

31 (7671) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи апрелĕн (ака) 15-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Тавралăх илемлĕрех пултăр

Уявсен уявĕ килет. Ăна тасалăхпа кĕтсе илер

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчи 206 № йышăнăвĕпе районта йывăçсем лартассипе тата тавралăха тирпей-илем кĕртессипе апрелĕн 14-мĕшĕнчен тытăнса майăн 13-мĕшĕччен уйăхлăх ирттерме палăртнă. Уйăхлăх валли ялсенче йывăçсем лартассипе тата тирпей-илем кĕртессипе туса ирттермелли ĕçсен планне çирĕплетнĕ.

Ял хуçалăх пайĕн ял хуçалăх предприятийĕсемпе калаçса татăлса йывăçсем лартса хăвармалли лаптăксене уйăрмалла, ку тĕлĕшпе эрозипе кĕрешес ĕçсем çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те предприятисемпе тата организацисемпе калаçса татăлса хăйсен территорийĕсенче тирпей-илем ыйтăвĕсемпе ĕçлеме тивĕç. Çут çанталăк сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлекен тĕп специалист-эксперчĕн Ильинка лесничествипе калаçса татăлса лартса хăвармалли материалсемпе тивĕçтермелле.

Мăн кун уявĕ çывхарса килет. Чăваш çынни мĕн ĕлĕкрен çак уява кил-çурта çуса тасатса, тавралăха пуçтарса тирпейлесе кĕтсе илнĕ. Ырă йăла паян та пăрахăçа тухман.

Иртнĕ эрне кун Муркаш ялĕнчи учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекенсем тавралăха тирпей-илем кĕртрĕç. Юр айĕнчен тухнă тĕрлĕ тасамарлăха пуçтарчĕç, йывăç тураттисене иртрĕç.

Район центрне тирпей-илем кĕртессипе ĕçсем ку эрнере малалла пыраççĕ. Нумай хваттерлĕ çуртсенче тата харпăр хăй пӳрчĕсенче пурăнакансем те çак ĕçрен аякка юлмасса шанаççĕ.

Кашни ялтах тавралăха тирпей-илем кĕртессипе пурнăçламалли ĕçсем сахал мар.

А. ИВАНОВ.

Сăн ӳкерчĕксенче: район администрацийĕн ĕçченĕсем тирпей-илем кĕртес енĕпе яланах ырă тĕслĕх кăтартаççĕ, кăçал та вĕсем пуринчен малтан ĕçе тытăнчĕç.

Н. ГРИГОРЬЕВА сăн ӳкерчĕкĕсем.

Республикăра

Пенси ыйтăвĕсене ăнлантарса параççĕ

Ака уйăхĕн 10-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева тата «Единая Россия» партин регионти общество йышăнăвĕн ертӳçи Валерий Андреев республикăра пурăнакансене пенси ыйтăвĕсене ăнлантарса парас енĕпе пĕрле ĕçлесси çинче калакан килĕшĕве алă пусрĕç.

Асăннă документпа килĕшӳллĕн патшалăхăн социаллă политикин обязательнăй пенси страхованийĕпе, пенсипе тивĕçтерессипе, çăмăллăхçăсене, ачаллă çемьесене пулăшассипе çыхăннă тата халăхшăн пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтăва уçăмлатса парас енĕпе вăйсене пĕрлештермелле. Çак тĕллевпе информацине ăнлантару ĕçне йĕркелемелле, общество йышăнăвĕ урлă халăха Пенси фончĕн ĕç-хĕлне çутатакан материалсемпе паллаштармалла, çынсемпе тĕл пулмалла, вĕсене уйрăммăн йышăнмалла тата граждансен çырăвĕсене пăхса тухмалла.

Налук инспекцийĕнчен хыпарлаççĕ

Транспорт хуçисене пĕлме

Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ çапла пĕлтерет: 2008 çулшăн транспорт налукĕ тӳлессипе парăмсем 2009 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕ тĕлне 5155 пин тенкĕпе танлашнă, вăл шутран пенисем – 574 пин тенкĕ. Транспорт налукне вăхăтра тӳлемесен Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 75-мĕш статйипе килĕшӳллĕн иртсе кайнă кашни куншăн пени шутласа пама тивĕç. Ку вăл кашни транспорт хатĕрĕ пуçне кашни куншăн 1,5 тенкĕпе е ытларах та танлашать.

Кунсăр пуçне транспорт налукне тӳлеменнисем тĕлĕшпе ытти мерăсемпе те усă курма палăртаççĕ. Вĕсен парăмсене районти приставсен служби урлă саплаштарма тивĕ. Парăмсене татманнисем Раççей Федерацийĕн тулашне тухса кайма пултараймĕç, вĕсен даннăйĕсене ятарлă федераллă базăна кĕртĕç. Çитменнине тата транспорт налукĕ енĕпе парăмсем пуррисен автотранспорта техосмотр тăратас енĕпе йывăрлăхсем пулĕç.

Çавна та каласа хăварасшăн. Транспорт налукне Раççей Перекет банкĕн уйрăмĕсенче, кунпа пĕрлех почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем урлă та тӳлеме пулать.

И. ШОРОНОВА,
налук инспекцийĕн пай пуçлăхĕ.

Паян – информаци кунĕ

Кризиспа кĕрешесси, тавралăха тирпей-илем кĕртесси

Паян пирĕн районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Унăн теми – РФ Правительстви хатĕрленĕ кризиспа кĕрешмелли Программăран патшалăх влаçĕпе вырăнти самоуправлени органĕсем умне тухса тăракан задачăсем çинчен, тавралăха тирпей-илем кĕртессипе тата çурхи ака-суха ĕçĕсене ирттерессипе вырăнти самоуправлени органĕсем умĕнчи задачăсем çинчен.

Района физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ А.А. Николаев ертсе пыракан ушкăн килет. Вĕсем районти физкультурăпа спорт активĕпе канашлаççĕ, «Сывлăх» комплексра, Муркаш шкулĕнче, Йӳçкассипе Юнкă ял тăрăхĕсенче, «Оринино», «Свобода» хуçалăхсенче пулаççĕ.

Пĕрремĕш квартал итогĕсем: ял хуçалăхĕ

Кăтартусем чакаççĕ

Тин кăна 2009 çула кĕтĕмĕр тейĕн, 1 квартал вара хыçа та юлчĕ. Шел пулин те, унăн кăтартăвĕсем савăнтармаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илнине тишкерер. Аш-какай пĕтĕмпе 1555,8 тонна туса илнĕ, иртнĕ çулхин 91 проценчĕ пулать çакă. Пысăк ял хуçалăх предприятийĕсенче çухату тата пысăкрах. Вĕсенче аш-какай пĕлтĕрхи 336,9 тонна вырăнне 252,6 тонна çеç туса илнĕ: 75 процент пулать вăл.

Сĕт суса илнипе паллашар. Пĕтĕмпе 10492 тонна сĕт суса илнĕ, иртнĕ çулхин 98,8 проценчĕ пулать çакă. Ку хутĕнче те пысăк ял хуçалăх предприятийĕсенче çухатусем пысăкрах. Вĕсенче 1901 тонна сĕт сунă, пĕлтĕрхин 93,2 проценчĕ.

Хуçалăхсенче кашни ĕнерен сĕт сăвасси ӳснине палăртма кăмăллă. Иртнĕ çул кашни ĕне 872 килограмм сĕт антарнă пулсан, кăçалхи кăтарту 938 килограмма танлашнă.

Çăмарта илесси чакни те шухăша ярать. Пĕтĕмпе кăçал 12599,2 пин çăмарта илнĕ, иртнĕ çулхин 80,4 проценчĕ.

Мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен 520 грамм (91,7 процент) ӳт хушнă. Сыснасен ӳт хушаслăхĕ 328 грампа (103,5 процент) танлашнă.

Кашни 100 гектар çĕр пуçне районĕпе аш-какай 24,7 центнер (91,1 процент) туса илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсенче – 10,8 центнер (76,1 процент).

Кашни 100 гектар çĕр пуçне сĕт 166,5 центнер (98,8 процент) туса илнĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсенче – 69,4 центнер (120,3 процент).

Мăйракаллă шултра выльăх йышĕ те чакать, пĕлтĕрхи 19260 пуçран кăçал 17354 пуç юлнă. Сыснасем 16022 пуçран 11814 пуç çеç юлнă.

Кăтартусем ял хуçалăх отраслĕнче чакнине финанс кризисĕпе çыхăнтарма кирлĕ мар. Хамăр тăрăшса ĕçлемесен, çĕнĕ технологисене вăя кĕртмесен, пирĕн кăтартусем ӳсес çук.

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçи.

РФ Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

Пенсисем пысăкрах пулĕç

Чăваш Енре пурăнакан 14 пин çын ытла пенсисен виçисене ӳстерме 2 миллион тенкĕ ытла хывнă. Патшалăх пенсисене финанслассин программипе килĕшӳллĕн вара хушма взноссене Раççейри пĕр миллион çын ытла тӳленĕ.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, кун пек заявленисем районĕпе 512 пулнă.

Хăйĕн пенсийĕ валли хушма взнос тӳлекенсене патшалăх унăн пенси счечĕ çине хушса тӳлет, 1:1 расчетпа саплаштарать, анчах та çулталăкне 12 пин тенкĕрен ытла мар. Пенси çулне çитнисен вара ку кăтарту 1:4 расчетпа танлашать, анчах та çулталăкне 48 пин тенкĕрен ытла мар. Патшалăх финансне илес пулсан, программа участникĕн çулталăкне 2 пин тенкĕ тӳлеме тивет.

Взноссене банк е ĕç укçинчен бухгалтери урлă хăйсен предприятийĕн документĕсем тăрăх куçарма май пур. Чăваш Енре пурăнакансем хушма тӳлев тӳлемелли икĕ мелпе те анлăн усă кураççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа хутшăнакан участниксенчен ытларахăшĕ уйăхсерен 800–1000 тенкĕ хываççĕ. Тӳлевсем 10–23 пин тенкĕ чухлĕ те пур. Хăйсен пенсийĕн виçи вăтамран 40–60 çулсенчи хĕрарăмсене шухăшлаттарать.

Хăйсен ĕçченĕсем пирки ĕç паракансем те тăрăшма пултараççĕ. Çынсен ĕç пенсийĕсем çине хушма взноссем хывнă май вĕсем налук тӳлес енĕпе çăмăллăхсем илме пултараççĕ. Акă çулталăкра кашни çын пуçне 12 пин тенкĕ куçарса парсан ĕç параканран НДФЛ, ЕСН тытмаççĕ, тупăшран та налук тытма пăхман.

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ.

Юбилей

Саламлатпăр

Поздравляем самую нежную и любимую маму, бабушку, свекровь, тёщу, сватью **РОМАНОВУ Нину Семёновну (с. Юнга) с 70-летним юбилеем**

Мама родная наша, милая,
Бабушка славная, незаменимая,
Хороший, понимающий нас человек,
Пусть дольше продлится твой жизненный век!
Чтоб ты никогда не болела,
Чтоб с радостью каждый день встречала,
Чтоб вечно душой была молода,
Мудрой, строгой и доброй такой!

С поздравлением сын, сноха, дочь, зять, внучки, сват, родные.

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, ăшă кăмллă кукамая, асаннене, хисеплĕ тăвана – Вăрманкас ялĕнче пурăнакан **Галина Андреевна ИВАНОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕрери чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн телей, пуянлăх, савăнăç.

Салампа: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем тата йышлă тăванĕсем.